

## Хветĕр АГИВЕР

# Ехрем хуҫа сăкăр-тăварĕн хурлă вĕҫĕ

Каламалли сăмахăма эпĕ «П.Е.Ефремовпа ывăлĕсем» Суту-илӳ ҫурчĕн хурлă вĕҫĕнчен тытăнасшăн. Ҫитмĕл ҫичĕ ҫул тăршши вырăнти купсалăх тăрринчи ят-сума тытса пурăннă Ехрем хуҫа-па ун ывăлĕсен ĕҫĕ-хĕлĕ 1917-мĕш ҫулхи пăтăрмах хыҫҫăн чăл та пар арканать, пĕр ĕмĕре яхăн тăрăшса пухнă пурлăх туххăм-рах ҫилпе вĕҫсе саланать. Ехрем хуҫа хăй ҫак синкерлĕ кунсене кĕтсе илеймест, сакăр вун ултă ҫула ҫитсе, нумай чирлесе выртмасăрах, 1907-мĕш ҫулта ҫĕре кĕрет. Пикеннĕ ĕҫе аталантарма ҫулталăк маларах «П.Е.Ефремовпа ывăлĕсем» ятлă Суту-илӳ ҫурчĕ йĕркелесе хăварать. Суту-илӳ ҫуртне тытса пыма хăйĕн аслă ывăлне Николай Прокопьевича шанать. Ывăлĕсем виҫҫĕн пулнă Прокопий Ефремовичăн: Николай, Сергей тата Федор. Ашшĕ хăварнă пурлăха пĕр чăмăра пĕрлештерсе аталантарса пынă вĕсем, суту-илӳ ĕҫĕнче те, кил-йышра та туслă пулнă. Асар-писер тапранса кайнă самана пурлă ҫынсене, вăл шутра Ехрем хуҫа ывăлĕсене, пĕр пурлăхсăр тăратса хăварать, килĕ-ҫурчĕ-сенчен кăлара-кăлара перет. Ҫĕнĕ влаҫ малтанласа вĕсене контрибуци хурать. «П.Е.Ефремовпа ывăлĕсем» Суту-илӳ ҫуртне тăратнă контрибуци шучĕ малтанласа 81,8 пин тенкĕ чухлĕ пулнă. Часах ҫак хак темиҫе хут хăпарса каять. Шупашкар сутуҫисемпе промышленникĕсене 1918-мĕш ҫулхи декабрьте пĕр миллион тенкĕ революциллĕ чрезвычайлă пĕр хут ҫеҫ тӳлемелли налук хураҫҫĕ, ҫав тӳперен 600 пин тенки Ефремовсен суту-илӳ ҫуртне тивет. Кунашкал пысăк укҫана кăларса пама тӳрех йывăра килнĕ вĕсене. Ҫавăнпа Ефремовсем, Шупашкарта малашне хăйсем валли пурнăҫ ҫуккине кура, ҫурт-йĕрĕсемпе предприятийĕсене пăрахса хăварса Хусана тухса каяҫҫĕ. 1918-мĕш ҫулхи май уйăхĕ тĕлне П.Е.Ефремов ывăлĕсем тытса тăнă ҫуртсене, складсене, ампарсемпе унти пĕтĕм пурлăха национализацилесе пĕтереҫҫĕ. Пысăк тупăш кӳрекен хăма заводне ҫеҫ Ефремовсем пĕр вăхăт сыхласа хăварма тăрăшнă. Ҫав сăлтавпах «П.Е.Ефремовпа ывăлĕсем» Суту-илӳ ҫурчĕ 1918-мĕш ҫулхи июль уйăхĕнче хăма

заводне Хусан кӗпӗрниччи кредитпа ссуда перекетлекен юлташлӑхсен союзне сутса ярать. Ҫакна ӗнтӗ путма пуҫланӑ ҫын улӑм ҫӳппинчен те пулин тыт-са хӑтӑлса юлма тӑрӑшнипе танлаштарма пулать. Договорта ҫырнӑ тӑрӑх хӑма ҫуракан заводпа пӗрле ун ҫумне туса лартнӑ пур хуралтӑ, пулӑшу пайӗсемпе ытти материалсем сутӑннӑ. Ефремовсем хӑйсен заводне 300 пин тенке хакласҫӗ, алӑ пуснӑ хыҫҫӑн ҫӗнӗ хуҫасенчен 100 пинне те пулин илме ӗлкӗрейнӗ-ши Ефремовсем – паллӑ мар; илнӗ пулсан та ҫак договор завода салатса ярасран хӑтарса хӑварма пултарайман. Мӗншӗн тесен ҫӗнӗ влаҫӑн «эксплуататорсене» авӑртса тӗп тӑвас тесе карӑлтатакан арманӗн чулӗ тата хаяртарах ҫаврӑнма тытӑннӑ.

Чӗр тавар ҫуккине пула хӑма ҫуракан завод часах хупӑнать, унти оборудованин пӗр пайне ҫаратса пӗтересҫӗ, упранса юлнӑ пайӗпе хулари пӗрремӗш электростанци тунӑ чухне усӑ курасҫӗ.

Ехрем хуҫан национализациленӗ ҫурчӗсенче ҫӗнӗ влаҫӑн тӗрлӗ организацийӗсем вырнаҫасҫӗ, унти пурлӑхне те хӑйсем хушшинче валеҫесҫӗ: РКП(б) область комитетне, облӗҫтӑвкома, облвоенкомата, милицие, ЧК-на, ревкома, чӑваш театрне, «Ирхи ҫӑлтӑр» коммунӑна тата ыт.те. Нумай тупрана комиссарсем хӑйсем патне сӗтӗрнӗ. Халиччен никамах та пулманскерсем тӑруках саккун кӑларакансем пулса тӑнипе хавхаланса кайнӑ пулмалла. Начасрах ют пурлӑха хӑйсен туса хурасҫӗ: ют шӑлавара, ют жилета, ют кравате, ют минтер-утияла, ют чашӑк-тирӗке...

Ехрем хуҫа ывӑлӗсен пурнӑҫӗпе ӗҫӗ-хӗлӗн Хусанти тапхӑрӗ ҫинчен тӗпчесе пӗлни сахал. Пурлӑх туса курнӑ ҫынсем, ахӑртне, ӗнерхи тухӑҫлӑ ларутӑру каялла килессе кӗтсе пурӑннӑ пулӗ. Анчах та кивӗ пурнӑҫӑн хупӑннӑ хапхи ҫӗнӗрен уҫӑлман. Революци умӗнхи ҫулсенче туяннӑ икӗ хутлӑ ҫуртра пурӑннӑ Хусана килсе лекнӗ Ефремов ывӑлӗсем. Часах «маузер юлташ» революци ячӗпе ку ҫурта та национализацилет, хуҫисем вара, ҫиелти тумтирӗпе юлнӑскерсем, ҫемье альбомне ҫеҫ илме пултарнӑ. Килсӗр-ҫуртсӑр пулса тӑрсан вӗсем Айвазовский урамӗнче ҫурт туянасҫӗ, йӑх тӑсӑмӗн пӗр туратти паян кунччченех унта пурӑнать теҫҫӗ.

Ҫав ҫулсенче Шупашкарти илемлӗ ҫуртсенчен чи чаплипи, паллах, Ехрем хуҫан К.Маркс (унччченхи Благовещени) урамӗнче вырнаҫнӑ ӑру ҫурчӗ пулнӑ. Ҫак ҫурт саманине кура чылай хурашур тӳссе курнӑ, такама та хӳтӗ панӑ: пӗр вӑхӑт ку ҫурт «Искусство керменӗ» те, музей та пулса пӑхнӑ. Музей пулнӑ вӑхӑтра, музей ҫыннисенчен ирӗк ыйтмасӑр, Ехрем хуҫан садне такама усӑ курма панӑ пулнӑ. Ҫавна пула унти ҫимӗҫ йывӑҫҫисем юхӑнсах кайнӑ. Вӗсен ҫумне лашисемпе ӗнисене кӑкара-кӑкара хӑварнӑ, никам та ку сада пӑхса тӑман.

НЭП вӑхӑтӗнче Ефремовсем ӑру ҫуртне тавӑрма шутласҫӗ. Ехрем хуҫан ывӑлӗсенчен пӗри Сергей Прокопьевич ӑна Хусанти «Селькредитпромсоюз» кооперации урлӑ каялла тавӑрасшӑн пулать. 1924-мӗш ҫулхи декабрь уйӑхӗнче ку союз Чӑвашоблкоммунпай умне Ехрем хуҫан унччченхи именине асӑннӑ союза тавӑрса пама хут тӑрататать. Иск тӑратаканӗсем С.П.Ефремов 1918-мӗш ҫулта ӑру ҫуртне договор туса ҫак союза 36 ҫуллӑха арендӑна панине, каярахпа асӑннӑ ҫурта союза пуҫӗпех сутса янине ҫырса кӑтартнӑ. ВЦИКӑн 1918-мӗш ҫулхи августӑн 20-мӗшӗнче тухнӑ «Хулари куҫми харпӑр хӑй пурлӑхне пӗтересси ҫинчен» кӑларнӑ декретпа тин ку ҫурт муниципаллӑ хуҫалӑх аллине куҫнӑ, ӑна асӑннӑ союзран туртса илнӗ. Анчах та правительство «Селькредитпромсоюз»

кредитлă кооперацин муниципаллă çурт-йĕрне тавăрса памалли çинчен калакан ятарлă постановленине кăларсан, С.П.Ефремов, çуртăн пĕртен-пĕр саккунлă хуçи пулнă май, ăна каялла тавăрса пама ыйтать. Унăн çыннисем çак хиствепе Шупашкара килсе çитеççĕ. «Чăвашоблкоммунпай» юрисчĕ, тăратнă хутсемпе паллашсан, союзран килсе çитнĕ çынсенчен «Шупашкарта Октябрьти революци пулса иртменнине» ĕнентерме ыйтнă тата 1918-мĕш çулта асăннă çурта туянасси пирки С.П.Ефремовран мар, Шупашкарти депутатсен советĕнчен ирĕк ыйтма тивни çинчен каланă. 1925-мĕш çулхи июнь уйăхĕнче «Чăвашоблкоммунпай» кантурĕнче çапла йышăну кăларнă: «ыйтăва пăрахăçлас, ăна пăхса тухмалли комиссие туса хурас мар». «Селькредитпромсоюз» çыннисене капла пулăм çырлахтармасть, ку ыйтупа вĕсем Чăваш АССРĕн Ĕç тăвакан Тĕп Комитетне тухаççĕ. Тепĕр çултан, 1926-мĕш çулхи июль уйăхĕнче, ЧАССР Ĕç тăвакан Тĕп Комитетăн председателĕ И.И.Илларионов, ĕç-пуçпа паллашсан, йĕкĕлтесе çырнă: «Нацисен лигине çырса ярăр». Хусантан килнĕ союз представителĕсен нимĕнсĕрех каялла таврăнма тивет. Çакăн хыççăн, ахăртнех, С.П.Ефремовăн Шупашкарта юлнă пурлăхĕн пĕр пайне те пулин кĕленсе илес шанчăкĕ сӳнмеллипех сӳннĕ.

Ехрем хуçан тĕп çуртĕнче тĕрлĕ çулта тĕрлĕ организаци хуçаланнă. Кунта ГПУ, Наркомат тата Чăваш АССРĕн шалти ĕçĕсен министерстви пулнă. Иртнĕ ĕмĕрĕн вăтармĕш çулĕсенче кунта «халăх тăшманĕсене» асаплантарнă, çӳлти хучĕсенче кăра органсен сотрудникĕсем пурăннă. Астăвакансем каласа панă тăрăх, çав çулсенче çак çурт умĕнче чарăнса тăма тата путвал кантăкĕсенчен пăхма юраман, унтан асапланакансем йынăшни илтĕннĕ... КПСС XX съезчĕ хыççăн çав кантăксене шăлса питĕрсе хунă.

Çак çуртра çавăн пекех Шупашкар хулин ĕç тăвакан комитечĕ, «Ялав» журналпа «Тăван Атăл» альманах редакцийĕсем, Чăваш АССР писателĕсен тата композиторĕсен союзĕсем, ашпăш тресчĕ, В.И.Ленин музейĕн филиалĕ вырнаçнă пулнă. Халĕ унта Чăваш Республикин наци музейĕн экспоначĕсем упранаççĕ, тĕрлĕ выставкăсем ирттеççĕ.

Николайпа Федор Ефремовсем иртнĕ ĕмĕр пуçламăшĕнчи самана арканăвĕ хыççăн нумаях пурăнаймаççĕ, 1921-мĕш çулхи выçлăх вăхăтĕнче вилсе выртаççĕ. Вĕсене пытарнă вырăн халĕ те паллă мар. Тен, Казанка шывĕ леш енчи Казицкий мăнастирĕн масарне пытарнă пулĕ теççĕ. Халь кунта атăпушмак çурчĕпе Химиксен паркĕ вырнаçнă. Вăтăрмĕш çулсенче ку вырăнта авиаци завочĕ тума тытăннă. Çавăнпа масара хупнă пулнă. Кăшт вăхăт иртсен ун урлă трамвай çулĕ хывнă. Вăрçă çулĕсенче вара ку вырăнтан хăйăр кăларма тытăннă...

Çын хăй ĕмĕрне мĕнле пурăнса ирттерессе пĕлмест. А.С.Пушкинăн «Что день грядущий нам готовит?» тени кирек хăш вăхăта та, кирек кама та юравлă иккен. Ехрем хуçан вăталăх ывăлĕн Сергей Прокопьевичăн пурнăçĕ кăшт лăпкăрах килнĕ. Вăл хăй ĕмĕрне кил-йышĕпе пĕрле Хусанти Айвазовский урамĕнчи çуртра пурăнса ирттернĕ. Пуштăра ĕçленĕ, 1931-мĕш çулта вилнĕ. Унăн арăмĕ, Нина Ивановна, 1942-мĕш çулта çĕре кĕнĕ. Иккĕшне те Хусанти чăваш масарне – Ар масарне – пытарнă.

Ехрем хуçан кĕçĕн ывăлĕн Федор Прокопьевичăн керменĕ вăл – К.Иванов (унччен Соборная) урамĕнчи чиркĕве хирĕç ларакан икĕ хутлă çурт. Асарписер çулсем вăхăтĕнче унта коммуна

вырнаҫнӑ пулнӑ, каярах – ача-пӑча сачӗ. Совет учрежденийӗсенче ӗҫлекенсем валли хваттерсем те уйӑрнӑ пулнӑ унта. Пӗр вӑхӑт республика библиотеки те пулнӑ.

Николай Прокопьевич Ефремов ҫурчӗ пирки те каласа хӑварар. Вӑл хальхи Чӑваш наци конгресӗ вырнаҫнӑ ҫурт. К.Маркспа Воробьев композиторсен урамӗсем хӗресленнӗ ҫӗрте ларать. Унта тӗрлӗ ҫулсенче тӗрлӗ кантур хӗвӗшнӗ – Чӑваш автономийӗн облаҫри ревкомӗ, Коммунистсен партийӗн облаҫри комитечӗ, ача-пӑча валли сӗт апачӗ хатӗрлекен кухня, ача-пӑча приючӗ, мӑшӑрлану керменӗ, Чӑваш писателӗсен союзӗ. Республикӑри писательсен союзӗ Ленин проспектӗнчен кунта куҫнӑ хыҫҫӑн манӑн та ку ҫуртра Союз председателӗнче ӗҫлеме тӳр килчӗ. Николай Прокопьевич, каларӑмӑр ӗнтӗ, Ехрем хуҫан аслӑ ывӑлӗ пулнӑ. Ку ҫурта вӑл 1909-мӗш ҫулта ашшӗ ҫуртӗнчен инҫе мар тутарнӑ. Апла пулсан ӑна туса лартнӑранпа часах 100 ҫул ҫитет. Николай Прокопьевичпа Александра Флегонтовнӑн ача пулман-мӗн. Хӑйсем ҫӗре кӗрсен вӗсем ку ҫуртран пӗчӗк чиркӳ хӑтлама ыйтса хӑварнӑ тесе калаҫкаланине илтнӗ эпӗ. Маччисем икӗ хучӗн те питӗ ҫӳллӗччӗ. Халӗ ҫӗнӗ хуҫасем ку ҫурта шалтан пӑсса хӑйсемле пӳлӗмлесе тухнӑ курӑнать. Ҫуртпа юнашар Канадӑран илсе килсе лартнӑ икӗ кӗмӗл чӑрӑш ӳснӗ имӗш. Ҫуртӗнче электрица ҫуннӑ, телефон ӗҫленӗ – пурӑннӑ ҫынсем, пурӑнас тесех пурӑннӑ. Хусанта пурӑнакан Л.Н.Максимов, хими наукисен кандидачӗ, С.П.Ефремовӑн Екатерина хӗрӗн Ирина ятлӑ хӗрне качча илнӗскер, иртнӗ ӗмӗрӗн юлашки ҫулӗсенче эпир ӗҫлекен ҫурта кӗрсе тухнӑччӗ. «Эпир ку ҫурта тавӑрас пирки сӑмах тапратмастпӑр, ҫурчӗ ҫине ун хуҫисене чысласа асӑну хӑми ҫакасчӗ», – тесе сӗнсе пӑшӑрханса калаҫнӑччӗ вӑл. Хӑми, ав, паян кун та ҫук. Хӑнапа пӗрле эпир Ехрем хуҫапа унӑн мӑшӑрне (Екатерина Васильевна упӑшкинчен пӗр ҫул маларах, 1906-мӗш ҫулта, ҫӗре кӗнӗ) пытарнӑ чиркӗве кайнӑччӗ. Чиркӳ путвалне те кӗрсе тухнӑччӗ. Юнашарти хӗрарӑмсен мӑнастирӗнче ӗҫлекен Кӗркури атте илсе кӗртнӗччӗ пире унта. Ун чухне ӗҫлемен (халӗ ӗҫлет) чиркӳ айне пытарнӑ Екатерина Васильевнапа Прокопий Ефремовичӑн ӳчӗсене кӑларса пӑрахнӑ хыҫҫӑн «ҫӗнӗ саманаҫӑсем» ҫав шӑтӑксене бетонпа шӑлса лартнӑ паллисене те кӑтартнӑччӗ. Легенда шайӗнче каласа панине те илтнӗччӗ ун чухне: А.И.Терентьев тавра пӗлӳҫӗ шухӑшӗпе, Прокопий Ефремовичпа Екатерина Васильевнӑна пытарнӑ саркофагсене уҫсан, ӳчӗсене кӑларса ывӑтса, унти спиртне йӑлт ӗҫсе янӑ пулать тӗнчене никӗсрен аркатса ҫӗнетме ӗмӗтленекенсем. Кӑларса пӑрахнӑ ӳчӗсене чавса чикнӗ-ши, чикмен-ши, паллӑ мар... Урӑхла каласа паракансем те пур: П.Е.Ефремов тупӑкӗ ҫемье масарӗнче 1920-мӗш ҫулчченех ларнӑ пулать. Ҫакна тӑхтавсенче кунта чупа-чупа килекен Шупашкар коммунин шкулӗнче вӗреннӗ ҫынсем ҫирӗплетсе пама пултараҫҫӗ имӗш. Ывӑлӗсем ашшӗ-амӑшӗн ӳчӗсене пытарма Хусана илсе кайнӑ тени те халӑхра ҫӳрет.

Николай Прокопьевичӑн ҫурчӗ шалтан тахҫанах хӑй пурӑннӑ чухнехи пек мар ӗнтӗ. Тултан та улшӑннӑ. Ҫурчӗ чаплӑ ҫыннӑн, ҫынни хӑй те чаплӑ пулнӑ-мӗн. Ӑна Патшалӑхӑн III-мӗш Думин депутатне суйланӑ пулнӑ иккен. Вӑл вара, ашшӗ вилсен пысӑк хуҫалӑха тытса пыма ҫӑмӑл пулманнипе (Николай Прокопьевич «П.Е. Ефремовпа ывӑлӗсен» ӗҫне йӗркелесе пынӑ) заявлени ҫырса Патшалӑх Думинчен пӑртакран тухать, ун чухне ҫавӑн пек йӗрке те пулнӑ. 1910-мӗш ҫулта

Н.П.Ефремова Шупашкар хулин пуҫне суйласа хураҫҫӗ. Вӑл унта хула управин председатель ӗҫӗсене туса пыма пуҫлать, хула интересӗсене уесри земствӑра хӳтӗлет.

Ехрем хуҫан ывӑлӗсем, ашшӗ пекех, пултаруллӑ пулнӑ. Федор Прокопьевич, хула нушисемпе ҫыхӑннӑ ытти ӗҫсенче яваплӑхра тӑнӑ пулин те, 1914-мӗш ҫулта, пиччӗшӗ хыҫҫӑн, Шупашкар хула думи шаннине кура хула пуҫӗ пулса тӑрать. Ехрем хуҫан вӑталӑх ывӑлӗ Сергей Прокопьевич та общество ӗҫӗ-хӗлне, хӑйӗн кулленхи ӗҫӗсемпе танах, тӗплӗ туса пырать, ашшӗ ҫӗре кӗнӗ хыҫҫӑн вӑл революци хумӗ ахӑрса кайиччченех Абаш салинчи Хусанти Турӑ Амӑшӗн тата хулари Пӑлхавӑшни чиркӗвӗсен старостисенче тӑрать.

Ехрем хуҫа (Ашшӗ тӗлне – Ефрем Ефимов) пирки те тӗрлӗ халап ҫӳренӗ халӑхра. А.Н.Студенецкий хӑйӗн ҫырса пӗтереймен «Мул» ятлӑ романӗнче ҫапла ҫырса кӑтартать: «Шӑрӑх ҫунтарнӑ вӑхӑтра Ефрем Ҫавал шывӗн хӗрринче кӗтӳ кӗтнӗ пулнӑ, выльӑхӗсене тапӑра антарсан пӑхать тӗмсем хыҫӗнчен, курать хирӗҫ ҫырана таркӑнсем пысӑк кимӗпе пырса чарӑннине. Лешсем ту тӑрринчи юманлӑха хӑпарнӑ та пуҫланӑ унта тарӑн шӑтӑк чавма, унта ылтӑн миххисене пӑрахма. Ефрем сывламасӑр тенӗ пек пытанса сӑнаса тӑрать вӗсене. Лешсем Атӑл енне киммипе кайса ҫухалсанах пытаннӑ ҫӗртен тухать те чавса чикнӗ мула каялла кӑларса урӑх ҫӗре пытарса хурать... Пытарнӑ мул патне каялла часах таврӑнмасть, мулне пӗчӗккӗн-пӗчӗккӗн тултса пурӑнать, суту-илӳ ӗҫне пуҫарса ярать, Шупашкар пуянӗсен шайне хӑпарать...»

Тепӗр тӗрлӗ халап та пур. Ӑна 1970-мӗш ҫулсенче ҫав тӑрӑхри ҫынсенчен ҫырса илнӗ. Ехрем кӗтӳҫӗ шыв хӗррине мӑшӑр хӑрах ут пырса чарӑннине курать имӗш. Утсем ҫинчен икӗ ҫын аннӑ та шыва ещӗк пӑрахнӑ, хӑйсем ҫийӗнчех каялла ларса кайнӑ. Вӗсене хыҫрахах жандармсем хӑваланӑ, мӗншӗн тесен лешсене Шупашкарти банка ҫаратса тухнӑ тесе шутланӑ. Ехрем арчана шывран кӑларнӑ те тепӗр ҫӗре кайса пытарнӑ. Кӑштах вӑхӑт иртсен вӑррисем каялла таврӑннӑ, виҫӗ сехет хушши укҫа арчине шыранӑ, тупаймасӑрах пӑрахса кайма тивнӗ. Ҫапла пуйса кайнӑ-мӗн Ефрем Ефимов.

Виҫҫӗмӗш халапӗ те пур. Ҫак халапа кура, Ехрем хуҫа Пугачев ҫыннисем чавса чикнӗ мула тупнипе пуйса кайнӑ имӗш. Халапӗсем татах та пулнӑ пуль. Вӗсем пурте Ехрем мул тупса пуйнипе ҫыхӑннӑ. Ехрем хуҫа ют пурлӑхпа хӑпарнине Шупашкар уесӗн хресченӗсем юрӑ хальлӗн те ӑсталаса хӑварнӑ:

Ехрем хуҫа – хыт хуҫа, хыт хуҫа,
Ылтӑн тупса пуйнӑ вӑл, пуйнӑ вӑл.
Ехрем хуҫа – хыт хуҫа, хыт хуҫа,
Вӑрман сутса пуйнӑ вӑл, пуйнӑ вӑл.
Ехрем хуҫа – хыт хуҫа, хыт хуҫа,
Тырӑ илсе пуйнӑ вӑл, пуйнӑ вӑл.

Паллах, ӗнерхи хресчен хӑвӑрт пуйса кайни кӑсӑклантарнах таврари ҫынсене. Тӗпчевҫӗсен шухӑшӗпе, П.Е.Ефремов «капиталиста» тухса пыни тырӑпа суту-илӳ тунипе тата чӑпта ҫапас ӗҫе йӗркелесе янипе ҫыхӑннӑ. Ан тив, халапсенчи пек тупӑннӑ мулпа ҫӗкленме май килсен те, Ехрем хуҫапа ывӑлӗсем ҫитмӗл ҫичӗ ҫул тар юхтарса ӗҫлемесен ӑнӑҫлӑ аталанайман пулӗччӗҫ. Пирӗн шутпа, вӗсен суту-илӳри тӗслӗхӗ пур ҫумне пур хушса ҫӗкленмелли ӗҫченлӗх. Паянхи кун ҫак ӗненӳ сутуилӳре ҫӗкленме ӗмӗтленекен пур хастарсене те кирлӗ пуль...

1821-мӗш ҫулхи июнӗн 29-мӗшӗнче Хусан кӗпӗрнине кӗрекен Шупашкар уесӗнчи Тукаш вулӑсӗн Шӗнерпуҫ ялӗнчи Ефрем Ефимовпа Стефанида Филипповна хысна (патшалӑх) хресченӗ-

сен кил-йышӗнче ывӑл ача ҫуралнӑ. Кун пирки Апаш чиркӗвӗн ачасене шыва кӗртсе ят ҫырса хумалли кӗнекинче палӑртса хуни пур. Истори наукисен кандидачӗ В.В.Орлов – тӗплӗ тӗпчевҫӗ. Апашри чиркӳ кӗнекинчи иккӗлентерекен пур вырӑнсене те ятарласа тӗпчесе тухнӑ вӑл. Ҫавӑнпа Ефимовсен ывӑл ачи ҫуралнӑ кунне шайлаштарса палӑртнине те чӑнлӑха ҫывӑх теме пулать. Чиркӳ кӗнекине вара Ефрем Ефимовпа Стефанида Филипповнӑн ывӑл ача ҫуралнине Прокопий ятпа ҫырса хураҫҫӗ. Кун ҫинчен Виталий Владимирович хӑйӗн «П.Е.Ефремов: легенды и действительность» кӗнекинче лайӑх ҫырса кӑтартнӑ. Эпир хамӑр калаҫӑва малалла та ҫак кӗнекене тӗпе хурса тытса пыма тӑрӑшӑпӑр.

Прокопий ҫемьери иккӗмӗш ача пулнӑ, асли – Афанасий ҫуралсан пӗр эрне кӑна пурӑннӑ. Прокопин Тарье йӑмӑкӗ те ача чухнех ҫӗре кӗнӗ. Нумай ачаллӑ кил-йышра ӳснӗ пулас купса: 1823-мӗш ҫулта Михаил шӑллӗ ҫуралать (купса ӗҫӗ-хӗлӗнче унпа пӗрле тӑрӑшаҫҫӗ вӗсем), 1829-мӗш ҫулта Униҫҫепе Кӗркури ҫут тӗнчене килеҫҫӗ, 1833-мӗш ҫулта – Хӗветӗр, тепӗр тӑватӑ ҫултан – Ӑртиван. Ехремӗн пур ачи те ачаран ӗҫпе пиҫӗхсе ӳснӗ. Ҫав ҫулсенчи Чӑваш ҫӗрӗнче услама аталантарса мала тухни пӗртен-пӗр Прокопий пулнӑ. Прокопий Ефремовичӑн пурнӑҫӗпе ӗҫӗ-хӗлне икӗ пая пайлама пулать пуль: Шӗнерпуҫ ялӗнче пурӑннине тата Шупашкара килсе тӗпленнине. Ялта вӑл хресченӗн тертлӗ ӗҫне хӑнӑхать, пӗлӳ илет, пӗрремӗш юратӑвӗпе тӗл пулать, авланать; хулара вара, Шупашкара ҫемйипех куҫса килсен, иккӗмӗш хут авланать, купса йӑхне мала кӑларать.

Вӑтӑр килтен ытла мар Шӗнерпусӗнче пурӑнакан, ҫыру ӗҫне япӑх пӗлекен Ехрем ачине пӗлӳ парса ӳстерес тесе хытӑ тӑрӑшнӑ. Хусанти Турӑ Амӑшӗн Апашри прихутӗнче виҫӗ шкул пулнӑ, вӗсенчен хӑшӗнче Прокопий хута вӗренни паллӑ мар. Анчах та Прокопие вулама тата ҫырма вӗрентме 1812-мӗш ҫулхи вӑрҫа хутшӑннӑ Якур салтак тӑрӑшни ҫинчен ҫырса хӑварни пур. Хӑварт ӑнкарса вӗренет Прокопий. Архивра ашшӗшӗн алӑ пусса панӑ хутсем те чылай упранаҫҫӗ. Ҫитӗннӗҫемӗн юрату туйӑмӗ те иленет йӗкӗте. 21 ҫулта вӑл пӗрремӗш хут авланать, хӑйӗнчен пӗр ҫул кӗҫӗнрех хӗре – Васильева Уҫтука – качча илет. Арӑмӗ Шупашкара куҫсан чахуткапа чирлесе вилет. Вӗсем пӗрле пурӑннӑ хушӑра пилӗк хӗрпе пӗр ывӑл ҫуратаҫҫӗ: Елен, Кӗтерне, Агапи, Хвекла, Петӗр тата Анна. Арӑмӗ ҫӗре кӗнӗ хыҫҫӑн тӑватӑ ҫул урҫара пурӑнать вӑл, ачисене хӑех пӑхать, купса ӗҫӗпе тӑрмашать. Иккӗмӗш хут 1859-мӗш ҫулта авланать, вун ҫиччӗри вырӑс хӗрне – Екатерина Васильевнӑна качча илет. Арӑмӗпе вӗсем тӑхӑр ача ҫуратаҫҫӗ: Николай, Сергей, Раиса, Федор, Евгения, Екатерина, Евпраксия, Алексей, Родион. Ачисенчен иккӗшӗ ҫамрӑклах ҫӗре кӗнӗ.

П.Е.Ефремов хресченрен купсана, купсаран промышленника ҫити ӳснӗ ҫын. Вӑл – несӗлтен несӗле пыракан хисеплӗ гражданин. Ку купсасене паракан чи сумлӑ ят пулнӑ. Ӑна ҫирӗм ҫултан кая мар гильди стажӗллӗ купсасем ҫеҫ тивӗҫнӗ. Ашшӗпе пӗрле ку сумлӑ ят ачисене те тивӗҫнӗ. Прокопий Ефремович суту-илӳ ӗҫне ҫара вырӑнтан тытӑнман. Ашшӗ, Ефрем Ефимов, купсасен гильдинче тӑман пулин те, купсасен йӑхне пуҫарса янӑ. 1861-мӗш ҫулхи реформӑччченех Ефрем Ефимов ал ӑсти ӗҫӗпе тата тӗш тырӑ сутса услам тума вӗреннӗ, Шупашкарта икӗ пысӑк ҫурт туяннӑ, ятлӑ-сумлӑ хула ҫыннисен шутне кӗнӗ. Ун статусне «купса та, дворянин та мар, хӑй пуҫарнӑ

ĕçĕн хуçи» теме пулнă. Халăхра çавăнпа Ехрем хуçа ятпа çӳренĕ. Ку ят хăйĕнчен ывăлĕсене те куçнă.

Эпĕ ку хайлавра П.Е.Ефремов купса гильдийĕ пĕрре хăпарса, тепре анса пырса, унтан тата çӳлерех хăпарса-тĕрекленсе вăй илсе пынине тĕпĕ-йĕрĕпе çырса кăтартас теместĕп. Суту-илӳ ĕçĕ вăл мĕн лайăхпа мĕн япăха хăех ăнкарттарса пырать пулас. Çакна çеç калама пулать: пурлă çын шайне П.Е.Ефремов купса суту-илӳ ĕçне хăй пĕлсе туса пыма пултарнипе, кирек мĕнле ĕç-пуçа та çиччĕ виçсе пĕрре касма ăн çитернипе хăпарнă, Шупашкарăн ытти купсисенчен мала ӳкнĕ. «П.Е.Ефремовпа ывăлĕсем» Суту-илӳ çурчĕн бланкĕ çинче «Фирма 1840-мĕш çултанпа ĕçлет» тесе çырнă пулнă. Çаппа вара Ефремовсем услам ĕçне-хĕлне официаллă йĕркепе тапратса янă çула çак вăхăтпа шутлама пулать. Услама ӳстермелли тĕп май курттăмăн суту-илӳ туса тупăш илни пулнă. Вĕсем тĕш тырăпа, тăварпа, сӳс-кантăрпа, тир-сăранпа, тăварланă салăпа, пулăпа, хуçалăхра кирлĕ ытти чĕр-таварпа суту-илӳ тунă. П.Е.Ефремов услам ĕçне тĕш тырăпа суту-илӳ тунинчен пуçланă. Уйрăмах вăл Санкт-Петербург чиновникĕпе тунă контракт хыççăн Рыбинск хулине пăчĕ-пăчĕпе çăнăх ăсатса ĕçе ăнтарса ярать. Çав тĕллевпе темиçе тĕлте тырă усрамалли ампарсем тытать. Управ тытаççĕ вĕсем чĕр тавара – управсăр услам çук. Çăнăх сутасси – тупăшлă япала. Çăнăх авăртма шыв арманĕсене те хута яраççĕ, вăрманпа суту-илӳ тăвассине те кӳлĕнеççĕ. Вăрман пĕренисенчен хăма çураççĕ: 1890-мĕш çулта Прокопипе Михаил пĕртăвансем Шупашкарта хăма çуракан завод лартаççĕ. Ехрем хуçа кунти вăрманпа кăна мар, ытти çĕрти вăрманпа та суту-илӳ ĕçĕнче усă курать, Кострома кĕпĕрнинчи Ветлуга уесĕнче вăрман туянать. 1879-мĕш çултан унти çĕр Ехрем хуçан пулса тăрать, 1917-мĕш çулччченех сутăн илнĕ вăрман тупăш парать. Вăрманне çуллен сулăсем çыхса Шупашкарти хăма çуракан завода ăсатаççĕ. Çав сулăсен тăршши 8-10 çухрăма та тăсăлнă пулать юхан шывпа. Аякри вăрманта ĕçлеме вара Ехрем хуçа тăван Шĕнерпуçпе ун çывăхĕнчи чăваш хресченĕсене тара тытнă. Тата Сăрпа Атăл тăрăхĕнчи вăйпиттисене. Укçине хресченсем ĕçе пуçăниччченех сентябрь уйăхĕнче илнĕ, çуркуннепе вара йăлт ĕçлесе татнă. Çав вăхăтрах П.Е.Ефремовăн Ветлугăри имениййĕнче вăхăтлăх ĕçлекен рабочисен ĕçĕпе канăвĕнче хăйне май уйрăмлăхсем те пулнă. Хăш-пĕр çулне вăрман ĕçлеме тара тытнисен хисепĕ 400 çынран та иртсе кайнă.

Вăрман ĕçĕ – йывăр ĕç. Хĕлĕпе çĕр пӳртсенче пурăнса йывăç тӳнтермелле пулнă тара тытнă çынсен, çуркуннепе Атăлпа юхтарса антарма пĕренесене турттарса тухмалла пулнă. Ветлугăра ĕçлекенсем валли Ехрем хуçа пурăнма вăхăтлăх хуралтăсем тутарать. Хăйĕн рабочийĕсене Ехрем хуçа тивĕçлипе хаклама тăрăшнине çакă та лайăх кăтартса парать: 1897-мĕш çулхи январь уйăхĕнче П.Е.Ефремовăн управляющийĕ Костромари вăрман упракан комитета Л.П.Михайлов объездчикпа Л.М.Пищев хуралçăна медаль пама ыйтса çырнă. Тепĕр уйăхран Л.П.Михайлов Мухтав грамоти илет, тата тепĕр çур çултан Л.М.Пищева «Тăрăшнăшăн» кĕмĕл медаль парса чысласçĕ.

П.Е.Ефремов Шупашкарти хăма çуракан заводра ĕçлекен служащисемпе рабочисем валли пурăнмалли çуртсем тунипе те паллă. Ехрем хуçан тепĕр çĕнĕлĕхĕ: общежитире пурăнакансенчен хваттер укçи илмен, пӳлĕмĕсенче ятарлă хĕрарăмсем тасалăх тытса тăнă. Хăма çуракан заводри рабочисе-

не ӗҫ укҫи тӳлессине те хӑйне евӗрлӗ туса пынӑ Ехрем хуҫа: ӗҫленӗшӗн эрнесерен тӳлесе тӑнӑ. Завода хӑй е ывӑлӗсенчен пӗри пынӑ-мӗн те укҫа парса хӑварнӑ. Хӑш-пӗр рабочи, панӑ укҫаран пӑрӑнса, уйӑх вӗҫӗнче илме кӑмӑл тунӑ. «Апла сана укҫа-тенкӗ кирлӗ мар. Укҫа-тенкӗ кирлӗ мар пулсан вырӑнна нушаланакан валли пушатса пар», – тенӗ-мӗн те Ехрем хуҫасем ун пеккисене ӗҫрен кӑларса янӑ. Ҫав вӑхӑтрах каланине итлекен ҫынна хисепӗ уйрӑмах пысӑк пулнӑ. Акӑ, калӑпӑр, пӗр-пӗр рабочи Ехрем хуҫа патне ӗни ӳксе вилнипе пулӑшу ыйтма пырать. Ехрем хуҫа вара ӗни мӗнле вилнин сӑлтавне ыйтса-пӗлсе тӑмасть, шар курнӑ ҫынна ҫирӗм тенкӗ таран пулӑшу парса кӑларса ярать. Тата тепӗр кӑсӑк халап та халӑх асӗнче юлнӑ Ехрем хуҫан кӑмӑлӗ пирки. Пӗррехинче икӗ чӑваш хресченӗ завода вутта килнӗ пулнӑ: Ехрем хуҫа нушаланакансене укҫасӑрах хӑма заводӗнчи татӑк-кӗсӗксене парса янӑ. Пӑхать кантӑкран Ехрем хуҫа: табак енчӗкӗсене кӗсйинчен кӑларса чикаркка мӑкӑрлантарма шутланӑ хресченсем иккӗшӗ те расна шӑрпӑк курупки кӑларса чикарккисене расна шӑрпӑк пӗрчипе чӗртсе яраҫҫӗ. Ҫакна курса тӑракан Ехрем хуҫа вутта килнӗ хресченсене нимсӗрех каялла хӑваласа янӑ имӗш: «Лекмест сире вут-шанкӑ, чикаркка расна шӑрпӑк пӗрчипе чӗртекен – пуян».

1905-мӗш ҫулхи Раҫҫейри пӗрремӗш революци вӑхӑтӗнчи ҫӗршывӗпе иртнӗ забастовкӑсене те Ехрем хуҫа рабочийӗсем хутшӑнманни вӑл тара тытнӑ ҫынсемпе килӗштерсе ӗҫленине пӗлтермест-и? 1905-мӗш ҫулхи октябрӗн 24-мӗшӗнче тухнӑ «Атӑлҫи хыпарӗ» хаҫатра Ехрем хуҫан хӑма ҫуракан заводӗнчи рабочисем манифестацие тухни ҫинчен ҫырнӑ. Паллах, кунта сӑмах рабочисен пӑлханӑвӗ ҫинчен мар, вӗсем октябрӗн 17-мӗшӗнче тухнӑ патша манифестне ырлама пуҫтарӑнни пирки пырать. Ехрем хуҫан хӑма ҫуракан завочӗ Раҫҫейӗпех паллӑ пулнӑ пирки ун заводне ытти заводсемпе пӗрле 1907-мӗш ҫулта Раҫҫей финанс министерстви кӑларнӑ «Хапрӑк-завод промышленноҫӗ» кӗнеке те лайӑх ҫирӗплетсе парать.

Каларӑмӑр ӗнтӗ, 1906-мӗш ҫул «П.Е.Ефремовпа ывӑлӗсен» Суту-илӳ ҫурчӗ йӗркеленет. Ҫакнашкал суту-илӳ ҫурчӗ йӗркеленни пӗтӗм Раҫҫейӗпех кун пек йышши юхӑм сарӑлса кайнинчен те килнӗ, паллах. Унашкал суту-илӳ ҫурчӗсем Шупашкарта та пӗрре кӑна мар пулнӑ: Н.И.Иевлевӑн, пӗр тӑван Макарычевсен, А.П.Игумновпа ывӑлӗсен т.ыт. те. Вӗсенчен маларах пыраканни, паллах, «П.Е.Ефремовпа ывӑлӗсен» Суту-илӳ ҫурчӗ пулнӑ. Ҫак тӗслӗх те вӗсем питӗ тухӑҫлӑ ӗҫленине пӗлтерет: 1911-мӗш ҫулта, калӑпӑр, вӗсен суту-илӳри тавар ҫаврӑнӑшӗ 447 пин тенкӗрен те иртсе каять.

Ехрем хуҫа суту-илӳ ӗҫне пӗлсе ертсе пыма пултарни унӑн кашни утӑмӗнченех палӑрать. Акӑ, вӑл 1900-мӗш ҫулта хӑйӗн хӑма заводӗнчи пӑспа ӗҫлекен пушар машинине заводра кӑна мар, хулара та усӑ курма хула управипе калаҫса татӑлать. Чылай вӑйлӑ машина пулнӑ вӑл, 60 пӑта яхӑн тайнӑ, ҫаннисен тӑршшӗ – пӗр ҫухрӑма яхӑн. Ку машинӑпа усӑ курма тытӑннӑ хыҫҫӑн вырӑнти пушар команди пушар сӳнтернӗ вӑхӑтра килсе тухакан тӗп ҫитменлӗхрен – пичкесенчи шыв пӗтесрен хӑтӑлнӑ. Пушар пӑс машини вара ҫав шыва 200 чалӑшран уҫлама пултарнӑ. П.Е.Ефремов ҫак ырлӑхшӑн хула управинчен 20 ҫуллӑха хулана ҫити телефон тата электричество кӗртме юпасем лартма (хӑма ҫуракан заводран тытӑнса хӑй пурӑнакан ҫурт таран) ыйтнӑ. Унсӑр пуҫне вӑл асӑннӑ пушар машини валли ҫул-йӗр юсаса тӑма пулнӑ. Кун пек

сӗнӗве, паллах, кӑмӑлласа йышӑннӑ. Ефремовсен пур ҫурчӗсенче те часах электричество ҫути ҫуталнӑ, телефон сасси янӑраса кайнӑ, хула вара пушар сӳнтермелли хӑватлӑ машинӑпа усӑ курма пултарнӑ, ҫавӑн пекех Пасар лаптӑкӗпе Дума ҫурчӗ умӗнче электричество ҫути ҫуталса кайнӑ. Ҫак ансат мар ӗҫе сакӑр вунӑ ҫулсене ҫывхарнӑ купса йӗркеленӗ, вӑл пӗр вӑхӑтрах хула думин гласнӑйӗ, хула ҫыннисен кусҫми пурлӑхӗн комиссин членӗ тата налог комиссийӗн членӗ пулнӑ.

П.Е.Ефремовӑн усаллӑ ӗҫӗсем кунпа вӗҫленмен. Вӑл чылай вӑхӑт хушши присяжнӑй заседателӗн тата миравай судьян ӗҫӗсене те туса пынӑ. Пурнӑҫӗ тӑршшӗпе П.Е.Ефремов, хӑйӗн услам ӗҫӗпе ӗҫленисӗр пусне, тӗрлӗ хушма ӗҫсенче тӑрӑшнӑ. Пӗр вӑхӑт вӑл Шупашкар хулин тин ҫеҫ уҫӑлнӑ обществӑллӑ банкӑн директорӗ те пулса пӑхнӑ. Ун чухне Прокопий Ефремовича Шупашкар хула думи ҫак ӗҫе туса пыма виҫӗ ҫуллӑха суйлать. Ҫав вӑхӑт иртсен А.М.Шейнина суйлаҫҫӗ. Лешӗ, ку вырӑнта вунӑ ҫула яхӑнах ларса ирттерме пултарнӑскер, шанса панӑ ӗҫне йӑлт юхӑнтарса ярать. Вара банкӑн правлени членӗсем Прокопий Ефремовича тепӗр хут, асӑннӑ банк ӗҫне йӗркелесе яма, директора суйласа лартаҫҫӗ. Ҫапах та юхӑнтарса янӑ ӗҫе туртса кӑларма май килмест Прокопий Ефремовичӑн. Кредитпа илнӗ укҫисене тавӑрса пама нумай чухне май ҫуккине пула пӑртакран Шупашкарти обществӑллӑ банк хупӑнать. Шейнин хыҫҫӑн П.Е.Ефремова айӑплама пӑхаҫҫӗ. Ехрем хуҫан тӗрӗслӗхшӗн кӗрешме тивет. Обществӑллӑ банк ӗҫӗсене туса пынӑ вӑхӑтра П.Е. Ефремов хӑй пысӑк пӗлӳллӗ тата таса та тӳрӗ чунлӑ ҫын пулнине лайӑх кӑтартса парать.

П.Е.Ефремов хӑй ӑнаҫлӑ ӗҫлесе пынипе нихӑҫан та каҫӑрӑлман, пурлӑхӗпе мухтанман. Шар тӳснӗ ҫынна пулӑшассине хӑйӗн тивӗҫӗ тесе шутланӑ. Купса биографийӗнче выҫӑпа аптӑраса ҫитнӗ халӑха пулӑшма май тупнӑшӑн ӑна Шупашкар хула управипе думи 1892-мӗш ҫулта ятарлӑ тав туни те пур. Уйрӑмах Ехрем хуҫан чиркӳ енӗпе туса пынӑ пулӑшӑвӗ курӑмлӑ. Мӗн каласси, ӑҫтан ӗлкӗрсе пынӑ тульккӑш Прокопий Ефремович пур ӗҫе те лайӑх туса пыма. Паллах, унра ӗҫчен чӑваш юнӗ чупнӑ. Кӗрӗк арки йӑваласа ларакан ҫын Чӑвашри хапаллӑ ҫынсен шутне капашаяс ҫук. Ҫакӑ та интереслӗ: 1892 – 1907-мӗш ҫулсенче вӑл Шупашкар тӗрмин хиселлӗ директорӗ пулнӑ. Унта вӑл виличченех тӑнӑ.

П.Е.Ефремов Шупашкар тӗрмин хиселлӗ директорӗнче ӗҫлени унӑн пурнӑҫӗпе паллашнин ҫула майӗ пултӑрха. Чиркӳ пархатарӗшӗн тӑрӑшни вара П.Е.Ефремовшӑн чун тӗмсӗлни пулнӑ. Чиркӳ ӗҫӗ-хӗлӗпе ҫыхӑннӑ документсем, шел пулин те, сахалтарах. Акӑ, калӑпӑр, 1856-мӗш ҫулта тухнӑ «Шупашкар хула ҫыннисен кӗнеки». Унта 1851-мӗш ҫултанпа кӗнеке тухнӑ ҫулччenех Прокопий Ефремов Шупашкар уесне кӗрекен Туканаш вулӑсӗнчи Апаш салинче чиркӳ старостинче службӑра тӑнине каланӑ. Ун чухне Апаш чиркӗвӗн прихутӗнче вун икӗ ял, 800 кил, 4,5 пин чухлӗ ҫын шутланнӑ. Вӑтӑрти Прокопин ӗҫлӗ тата кӑмӑл-сипет енӗсене таврари ял ҫыннисем килӗштернине калать ку япала. Апаш ялӗнче ашшӗпе пӗрле Прокопий икӗ престоллӑ ҫӗнӗ чиркӳ туса лартать. Пуринчен ытла П.Е.Ефремов Шупашкарти хула варринче вырнаҫнӑ урамӗпе пӗр ятлӑ Пӑлхавӑшни чиркӗвне тирпей-илем кӳртес тӗлӗшпе нумай тӑрӑшнӑ. Ку чиркӗве 1684-мӗш ҫултах туса лартнӑ пулнӑ, тепӗр пилӗк ҫултан ӑна Хусан митрополичӗ Адриан кӗл туса тасатнӑ. Каярах Адриан Пӗтӗм Раҫҫей Патриархӗ те пулнӑ. Ку чиркӳ

тата кӗмӗл ризаллӑ, аметистпа тата ахахпа ҫавӑрнӑ Смоленск Турӑ Амӑшӗн турӑшӗпе паллӑ. Мӗншӗн-ха П.Е.Ефремов уйрӑмах ҫак чиркӳшӗн тӑрӑшнӑ? Мӗншӗн тесен ку чиркӗве Ехрем купсасен виҫӗ ӑрӑвӗн ҫемье чиркӗвӗ теме пулать. 1856 – 1861-мӗш ҫулсенче кунта купса ӑрӑвне пуҫласа яракан Ефрем Ефимов старостӑра тӑнӑ, 1862-мӗш ҫултан пуҫласа мӗн ҫӗре кӗричченех ку должнӑҫа унӑн аслӑ ывӑлӗ, пӗрремӗш гильди купси Прокопий Ефремович Ефремов туса пынӑ. Вӑл вилсен чиркӳ старостинче П.Е.Ефремов ывӑлӗ Сергей Прокопьевич ӗҫлеме тытӑннӑ, Николай Прокопьевич вара попечитель пулнӑ. Ҫак чиркӳре Ефремов купса ӑрӑвӗн тата ҫывӑх тӑванӗсен пурнӑҫ улшӑнӑвӗсене паллӑ тунӑ – венчете тӑни, шыва кӗртни, вилсен кӗл туни т.ыт. те.

П.Е.Ефремов Пӑлхавӑшни чиркӗвӗнче старостӑра тӑнипе пӗрлех хушма ӗҫсене те пайтах пурнӑҫлама ӗлкӗрнӗ, турӑ юнӗ валли хӗрлӗ эрех, ҫурта валли ӑвӑс, чиркӗве хутса ӑшӑтма ҫӗр кӑмрӑкӗ, вутӑ туянма пулӑшнипе пӗрлех вӑл чиркӗве ҫӗнетсе юсама та, чиркӳ валли кирлӗ ҫурт-йӗр тутарма та тӑрӑшнӑ. Ҫав ҫулсенчех П.Е.Ефремов чиркӳн сулахай енне сылтӑм енӗпе тан тӑвас тесе тӑстарать. Чиркӳ тавра решеткеллӗ тимӗр карта тыттарать. Хӑй укҫипе асап тӳсекен Иоанн ҫветтуй ячӗпе кирпӗчрен пилӗк тӑраллӑ часавай туса лартать.

Ятлӑ купсан ырӑ кӑмӑлӗ кунпа пӗтмен. Паллӑ, кӗлӗ ӗҫӗпе пурӑнакан чиркӳ ҫыннисен ҫирӗп ӗҫ укҫи пулман. Вӗсем чиркӗве ҫӳрекенсенчен пухнӑ укҫа-тенкӗпе, патшалӑх тата банк билечӗсен пухӑннӑ процент тупӑшӗсемпе пурӑннӑ (вӗсене тӗрлӗ купсасем «ӗмӗр-ӗмӗр чунӗсемшӗн кӗл тума» хывнӑ пулнӑ). Ахӑртнех, унашкал укҫа-тенкӗ вӗҫе вӗҫпе саплаштарса пыма кӑна ҫитнӗ. П.Е.Ефремов хӑй шучӗпе священнослужительсем валли чиркӳ ҫумӗнче икӗ хутлӑ ҫурт тутарса лартать. Ку ҫурт проектне кӗпӗрнен Хусанти правленийӗн уйрӑмӗ ҫирӗплетет. Вырӑнти протоирей пурӑнакан ҫурт та кивелсе юхӑннӑ пулнӑ. П.Е.Ефремов хӑй укҫипе ку ҫурта та кирпӗчрен хӑпарттарать. Чиркӗве вӑл укҫа-тенкӗпе тӑтӑш пулӑшса пынӑ пулнӑ, чиркӳ енчӗкне пинӗ-пинӗпех укҫа хывнӑ.

Чиркӳ старости ҫапла тӑрӑшуллӑ пулнине асӑрхамасӑр иртермен ӗнтӗ. 1886-мӗш ҫулхи май уйӑхӗнче Хусанти духовнӑй консистори П.Е.Ефремова чиркӳ ӗҫне пулӑшнӑшӑн мухтав хучӗ парса хавхалантарать. Таса Синод вара ӑна уйрӑм парне пама йышӑнать. П.Е.Ефремов чиркӳ ҫыннисемпе ҫывӑх ҫыхӑну тытнине те асӑнса хӑвармалла. Сӑмахран, вӑл Космодемьянск уесӗнчи Мӑн Сӗнтӗртен тӑватӑ ҫухрӑмри Карӑшлӑх чиккине вырнаҫнӑ арҫынсен мӑнастирӗн настоятелӗпе Антоний игуменпа тачӑ ҫыхӑну тытнӑ. П.Е.Ефремов И.Я.Яковлевпа е Н.В.Никольскипе тӗл пулни ҫинчен калани ҫук, анчах та Антоний игумен вӗсемпе тӑтӑш ҫыру ҫӳретнӗ.

Чӑваш культурин ҫыннисене те П.Е.Ефремов пӗлмен мар. Сӑмах кунта Иван Николаевич Юркин писатель-этнограф пирки пырать. 1890-мӗш ҫулта И.Н.Юркин Ехрем хуҫа патне ҫыру ярать. Унта вӑл хӑй чылай вӑхӑт чӑваш халӑхӗн историйӗ пирки материалсем пухнине калать, вӑл шутра 1100 юрӑпа 600 сӑмах каларӑшӗсем, юмахсем, аваллӑх ҫинчен каланисем пуҫтарни пирки ҫырать. И.Н.Юркин чӑвашсен Ехрем хуҫа пек ҫынни пуррине ӑнсӑртран пӗлет, апла пулин те унран ҫак ыйтусене ыйтса пӗлме шутлать: «Вы, быть может, обладаете знанием некоторых для меня важных сведений о прошлом наших чуваш: кто они, отку-

да и когда явились на Волге? Не сохранились ли в Ваших краях письменных свидетельств или устных преданий: когда, откуда и при каких обстоятельств они водворились в крае?» Вăл вăхăтра П.Е.Ефремов пысăк пурлăх çаварттаракан этем пулнă, Чĕмпĕрти пĕчĕк чиновник ыйтăвне хуравламасан та пултарнă. Апла пулин те, уçă кăмăллă та хайне мăнна хуман Прокопий Ефремович, вăхăчĕ кăйттине пăхмасăрах, уйăха майлă хушăрах Иван Николаевич патне çыру çырса ярать. Акă вăл çыру. Авторĕ ăна вырăсла çырнăран, çырнине вырăслах илсе кăтартар:

«Милостивый Государь!

На полученное от Вас письмо могу сообщить только то, что слышал от предков относительно чуваш, а именно: народ этот были прежде стрельцы, вооружение их было стрелы, которые даже мне приходилось видеть самому лично, сделаны они из пальмового дерева, со страусовым пером и с мамонтовым наконечником, к сожалению, что сейчас не знаю, где находятся, по всей вероятности, уже не целы; это было еще до крещения их, а откуда эти чуваши взялись, мне неизвестно, крещение же их происходило в царствование императрицы Екатерины, по речкам, в числе таких речек, как мне известно, на р.Рыкше, протекающей в Чебоксарском и Цивильском уездах Казанской губернии, при крещении мужской пол отделив от женского, ставили выше, а женский ниже и лет 25 была им дана льгота от уплаты податей и других поборов, а также от воинской повинности, более описать о чувашах ничего не могу.

С истинным почтением к Вам имею честь быть.

Ваш Прокофий Ефремов.

5 июля 1890 г.»

Çырăвĕнче П.Е.Ефремов хăй шухăшне мар, ваттисенчен илтнине пĕлтерет. Тепĕр çулталăкран И.Н.Юркинпа П.Е.Ефремов Ехрем хуçан тĕп çуртĕнче тĕл пулаççĕ. Çырура çырнă ыйтăвĕн тăсăмĕ те пулнă ĕнтĕ унта, паллах.

1891-мĕш çулхи май уйăхĕнче Чулхуларан Чĕмпĕре аннă чухне Ехрем хуçа патне чарăннă И.Н.Юркин. Вăл çул тĕрленчĕкĕсенче сумлă çыннăн халăх хушшинче çӳрекен сăнарне мар (пиртен тĕртсе тунă кĕпе тăхăннă, çăпата сырнă чăваш купси), чăн курнине сăнласа парать: «пĕвĕпе çӳллех мар çын, шап-шур кĕпе тăхăннă, хаклă галстук çыхнă, жилетки çийĕн хаклă сукнаран çĕлетнĕ сюртук тăхăннă. Пичĕ-куçĕ чипер, çулĕсене кура мар вăр-вар та йăрă, сасси çемçе. Сухалĕ чат чăваш сухалĕ, хурăмне кура ахăр çук çын хушшинче кунашкал сухала «качака сухалĕ» теççĕ. Арăмĕ – «майра», вырăс хĕрарăмĕсене кунти çынсем çапла калаççĕ. Аслă ывăлĕ – «çӳллĕ, хитре арçын, ашшĕнчен чаплăрах тăхăннă, аллинче пысăк ылтăн сехет йăлтăртататъ». Ехрем хуçа ăна пӳртне кĕрсе курма чĕннĕ, Мускавпа Чулхулана епле кайса килнине ыйтаыйта пĕлнĕ. Этнографа чăваш çыннисен йăли-йĕркисем кăсăклантарнине пĕлсен, Ехрем хуçа ăна Шупашкар пасарне çитсе курма, «Арçури» балладăн ку яхăнта шкулта ĕçлекен авторĕпе Михаил Федорович Федоровпа тĕл пулса калаçма сĕннĕ.

Ехрем хуçапа ывăлĕсем купса ĕçĕхĕлĕнче тата кил-тĕрĕшре хăйсене мĕнле тыткалани пирки ĕçлĕ тата çемьен кулленхи докуменчĕсенчен пĕлме пулать: сыхланса юлнă кил-йыш альбомĕсенчен, сăн ӳкерчĕксенчен, Ехрем хуçан мăнукĕ Екатерина Сергеевна Хусанта упранакан Таса Евангели çине паллă туса пынисенчен. А.И.Терентьев тавраПĕлӳçĕ Чăваш драма театрĕн актерĕ В.Родионов Ехрем хуçан управляющийĕн кун кĕнекине тупни пирки çырать. Чăнах та çапла пулнă пулсан тем тери

хаклă япала пулĕччĕ В.Родионов тупнă алҫыру. Эпир Ехрем хуҫан ĕҫĕ-хĕлĕпе кулленхи пурнăҫне тата лайăхрах пĕлме пултараттăмăр. Чăвашрадиора ĕҫленĕ вăхăтра эпир Виктор Иосифовичпа питĕ ҫывăхчĕ, куллен хутшăнса тăраттăмăр темелле. Ун аллине Ехрем хуҫан управляющийĕн дневникла ҫырса пынисем лекнине эпĕ илтмен. Тен, каланă та-и? Ҫамрăк пулнă-ҫке-ха – калани пĕр хăлхаран кĕнĕ те тепринчен вĕҫсе тухса кайнă пуль. Тепĕр тесен, такам пулнă-ха ун чухне пирĕншĕн Ехрем хуҫа, ара хамăр «хуҫара» ҫӳренĕ мар-и... Виктор Иосифович ҫăвар вылятса ҫӳрекен ҫын марччĕ, тупăннă та пулĕ ун тĕлне Ехрем хуҫан управляющийĕн кун кĕнеки. Тен, чиркӳ енĕпе лекнĕ пулĕ ку япала ун аллине: В.Родионов Шемшер пупĕн ачиччĕ пулас...

Халĕ Ехрем хуҫан ячĕ пирки калам. Прокопий тени вăл грексен Прокороз сăмахĕнчен пулса кайнă сăмах теме пулать – йĕннинчен кăларса авринчен ярса тытнă ҫара хĕҫ пĕлтерĕшпе ҫӳрет ку сăмах. Архив материалĕсенче ун ятне икĕ тĕрлĕ ҫырни тĕл пулать: метрика кĕнекисенче тата чиркӳ документсенче ытларах Прокопий тенĕ, чиркӳпе ҫыхăнман документсенче – Прокофий. Ҫавăнпа И.Н.Юркин патне ҫырнă ҫырăвĕнче те хăйне Прокофий тесе палăртнă вăл. В.В.Орлов вара хăйĕн «П.Е.Ефремов: легенды и действительность» кĕнекинче Прокопий ятпа усă курать.

Ҫакă та интереслĕ. 1910-мĕш ҫулта Ефремовсем Шупашкарта ашшĕпе амăшĕн вил тăприне Владимир тăвайкки ҫине палăкласа туса лартаҫҫĕ. Ҫăви ҫинче вара тăвайккипе пĕр ятлă Чăваш хĕрарăмĕсен общини тата мăнастирĕ пулнă. Халĕ унта хĕрарăмсен Шупашкарти Спас-Преображенски мăнастирĕ.

Ехрем хуҫан тӳрĕ те усă кăмăлĕ ҫинчен «П.Е.Ефремов: легенды и действительность» кĕнеке авторĕ В.В.Орлов ĕненмелле ҫырса кăтартнă. Пĕр вăхăт вăл хăй те Ехрем хуҫа лартнă ҫуртра ĕҫленĕ, унăн тата ывăлĕсен шăпине ăшне илнĕ. Чăвашра пурăннă паллă ҫынсен биографине пĕлес текенсемшĕн питĕ кирлĕ кĕнеке ку. Уйрăмах паянхи кун услам ĕҫне йĕркелеме ĕмĕтленекен ҫамрăксемшĕн. Кĕнекине, ман шутпа, тепĕр кăларăмпа кăларсан та вырăнлă та пархатарлă пулмалла. Автор тăван тăрăхăн ӳлĕмĕшĕн питĕ кирлĕ ĕҫ тунă.

1897-мĕш ҫулхи январь уйăхĕнче ирттернĕ перепись хучĕ ҫинче Прокопий Ефремович хăйĕн тăван чĕлхине вырăс чĕлхи тесе ҫырать. Ыйтса пĕлнĕ чухне кил-йышĕнчен уйрăм курăнас темен пулас. Ҫакна та шута илмелле: П.Е.Ефремов – купса тата промышленник, ĕҫе пуҫ тавра шайлаштарса тăвакан ҫын. Уншăн кулленхи «ĕҫ» чĕлхи, паллах, вырăс чĕлхи пулнă. Ку чĕлхепе юратнă арăмĕ – хитре вырăс хĕрарăмĕ калаҫнă, ачисем, унтан та ытла: ку чĕлхе ăнăҫу илсе килнĕ, ӳлĕме ҫул уҫса панă, пурлă пурнăҫ тума пулăшнă.

Ҫав вăхăтрах чăваш чĕлхинчен ютшăнман Ехрем хуҫа. Ахальтен мар вăл хăйĕн предприятийĕсене ытларах чăвашсене пуҫтарнă. Вĕсем ĕҫчен пулнине Прокопий ачаран пĕлсе ӳснĕ. Халран кайса тепĕр хут чĕрĕлсе тăнă чăвашăн халĕ хăйĕн республики пур. Чăваш чĕлхине те, вырăс чĕлхине те эпир патшалăх чĕлхисем тетпĕр. Тан чĕлхесем. Усламăн, паллах, чĕлхи пĕрре – тупăш, укҫа. Анчах усламне ҫын тăвать-ҫке. Ҫыннăн вара савнă чĕлхи, ашшĕ-амăшĕпе ҫут тĕнче панă чĕлхи пур. Ехрем хуҫа, тен, паян чăвашланса пыракан Шупашкарта чăвашлах калаҫатчĕ пуль. Ехрем хуҫапа ывăлĕсем хыҫҫăн Чăвашра Турă ирĕкĕнчен иртмен ҫĕнĕ чăваш хуҫасем ӳсчĕрччĕ. Вĕсен мул енчĕкĕ, Ехрем хуҫапа ывăлĕсенни пек, чи малтан кăмăл пурлăхĕпе тулса пытăр.